К 84.09
К27
Ч-38111

Марина Карягина

# Тӑваткӑл тӗлӗксем



Национальная библиотека ЧР
4-038111

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

*Ылтăнăмпа кĕмĕлĕме – Айтар ывăлăмпа*
*Илемпи хĕрĕме*



К 84.09(2Чув)
К 27

Марина КАРЯГИНА

ТĂВАТКĂЛ
ТĔЛĔКСЕМ
тетралоги

# чĕрĕлĕх ташши

поэма
тăваттăмĕш кĕнеке

8.01.03

художникĕ
Станислав Юхтар

ШУПАШКАР
«Руссика» - 2002

К84.09(=Чув)6-57

ББК 84 Чув
К21

ПРОВЕРЕНО
2010 28 СЕН 2017

Ч-38111

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-87315-026-5

КАРЯГИНА М.Тӑваткӑл тӗлӗксем: Тетралоги / Марина КАРЯГИНА;
Худож.:Станислав Юхтар. - Ш.: Руссика, 2002.- Т.4 :Чӗрӗлӗх ташши.
-48 с.: ил.

© М.Карягина. Текст 2002
© С.Юхтар. Рисунки 2002
© О.Улангин. Макет 2002

"Чĕрĕлĕх ташши" поэмăна темшĕн музыка произведенине çывăх куратăп... Эпĕ хама астума пуçланăранпах атте, хулпуççи таран лăпăс-лапăс çӳçлĕ, сахал калаçакан, пысăк кăвак куçлă йĕкĕтлĕхрен тухсах çитеймен вăрăм кăна ар, пуринчен те вăрттăн сăвă çыракан-скер, каçса кайса кĕвĕ-çемĕ итлеме кăмăллатчĕ. Унăнни пек темĕн чухлĕ хум тытакан, пластинка çавăрттаракан радиола ялĕпе те çукчĕ-тĕр-ха. Мана та вăл, ывăл кĕтнĕ çĕртен хĕр çуралнăскере, ун чухне хăлхаран кайман юрăри пек, Мариша тесе чĕнетчĕ. Купи-купипе пластинкăччĕ пирĕн килте. Атте вара, хĕрĕнкĕ чухне хăй валли ниçта канăç тупаймасăр ыйхă çухатса юрă-кĕвĕ итлетчĕ те, анне чарма ыйтсан, "ăнланăр-ха, музыкăсăр мĕнле пурăнас манăн" тетчĕ пăлханчăк саспа, икĕ аллипе пуçне ярса тытса. (Халь те çаплах). Эпĕ тĕлĕрнĕ май часрах ӳсесчĕ те аттене шучĕ çук "музыка" туянса парасчĕ тесе шухăшлаттăм...

Темиçе купăс пурччĕ пирĕн. Вĕсен тӳммисене номĕрлесе пĕтернӗччĕ: аннен, çирĕм урлă каçнă вĕри те канăççăр хĕрарăмăн, сасартăк купăс калама вĕренес килсе кайнă-мĕн. Вĕсем саккăрăн пĕртăван та, шăллĕсем куçне хупса, пуçне ухса ташламасăр тӳссе тăмалла мар купăс калатчĕç. Эпĕ, пĕчĕкскер, пӳрне чуппине епле те пулин курса ĕлкĕресчĕ тесе, куçа мăчлаттармасăр тĕлĕнсе пăхса лараттăм. Кăмăла тем тĕрлĕ ăрăмлама пултаракан купăс кĕвви чĕлĕхсенче мар, ăшра пурăннăн туйăнатчĕ те, иккĕленнипе пĕр купăсне пăсса та тĕрĕсленĕччĕ...

Пĕр пиллĕксенчеччĕ пуль эпĕ ун чухне. Пĕчченех Пăлакассинчи Тимĕр тетесем патне çĕр каçмалла кайса килме тĕв турăм. Тимĕр тете çемйинче темĕнле урăхла, эпĕ ăнкарса çитеймен, анчах мана илĕртекен кăмăлччĕ. Хамăр ялта кун пек кил курманччĕ эп. Тата... Вĕсен малти пӳртĕнче, чаршав хыçĕнчи улах кĕтесре, темле астармăш япала çакăнса тăрать: пичĕ çӳп-çӳхе сарă хăмаран, варри темме шăтăк, мăйĕ вăрăм, тăршшĕпе пăралуксем карăнтарнă. Иртнинче асанне "асту, ан тытнă пул!" тесе хытарсах хунăччĕ те, ниепле те тытса пăхаймарăм çав тĕлĕнтермĕше. Кăшта-ах кăна сĕртĕнсе пăхасчĕ те...

Тимĕр тетесен пĕчĕк хĕрачипе вылянă май, чаршав хыçне лекетĕп. Кунтах! Малтанхи çĕртех çакăнса тăрать вăл. Асăрханса гитара

*çумне пырса тăтăм. Пăлханнипе сывлăш пÿлĕнет. Перĕнесчĕ тетĕп-алă çĕкленмест. Çăвара сĕлеке килсе тулчĕ – çăтса ямассерен пĕтĕм пÿрте илтĕннĕ пек туйăнса тăрать. Вăхăт хĕсĕнсе ларнă пек пулса кайрĕ. "Халь те сĕртĕнеймесен, урăх нихçан та май килмĕ", тесе шутлатăп хам. Вара алла хуллен-хуллен хĕлĕхсем патне çĕклетĕп. "Чĕн-н-н-н!" туса каять сасă ял илтмелле. Чарăнми ян-раса тăрать! Хăлхана пĕтĕм вăйран хытарса лартатăп – янăрава пу-сарасчĕ кăшт! Ăшра çĕр сас чĕлтĕртетет – ниçта кайса кĕме çук! Пĕтĕм тĕнче – сасси-тĕсĕ-мĕнĕпе! – çав самантра пухăнса тăчĕ пек... Çавăнтанпа кашни япала ăшĕнче асамлă сас пурăннăн туйăнатчĕ мана. Япаласен чĕлхине пĕлес пулсан, вĕсем этем пĕлмен чылай вăрттăнлăх каласа парассăн туйăнатчĕ...*

*Каçпа çурăлакан хÿхĕм чечексем ÿстеретчĕ анне пахчара – анне ахаль мар хĕрарăм иккенне çавăн чухне ăнланнăччĕ эп... Хула ютлăхне хăнăхаймасăр яла пăрахса килнĕскер, вĕçĕ-хĕррисĕр ырă чун-чĕрипе вĕри кăмăлне ниçта шăнăçтарма пĕлместчĕ, чечексен чеченлĕхĕнче кĕвĕ илтетчĕ, çеçкисем те анне ĕçрен таврăннипе са-вăнса çурăлнăн туйăнатчĕç. (Халь те ытларах чечексем çинчен ка-лаçатпăр)...*

*Анне аттене час-часах "пăх-ха Маринăн пÿрнисене, пианино илсе парасчĕ ăна" тетчĕ. Тăваттăмĕш класра, шкула йыхравпа килсен, пĕр иккĕленмесĕр музыка шкулне çырăнтăм. Савăнăçа аннене ка-ларăм та, "ун чухлех тÿлесе тăраймăпăр", терĕ. Эпĕ вара тухса тартăм. Чарусăрскер, çулталăк çурă çÿрерĕм çапла кÿршĕ ялти музыка шкулне. Кĕвĕм хĕлĕх-чĕлĕхсенче маррине ăнланса илсен, хамах пăрахрăм вара. Класра "художник" шутланаттăм та, сăрă-сенче те марччĕ çав-ха кĕвĕм. Таçта... çывăхрах... каланасшăн пуçтарăнса пыракан сăмахсен уйрăм тĕнчинче... Тăван чĕлхемри сăмахсен ĕмĕрсерен хăватланса çитнĕ чĕрĕ асамĕнче, мĕнпур япа-лари пекех, ку таранччен никам "тĕкĕнмен" сассем – шалти шăпăрт кĕвĕсен вăрттăнлăхĕ – упраннăн туйăнатчĕ... Чĕлхемĕн "чĕлĕхĕсе-не" уçса пăхас килетчĕ...*

автор

1.

чĕлхесĕр ташăç эп! –
кăвар çисе ĕçеп –
таса сасне çухатнă
йыш варрине тухатăп,
куç кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)

çĕн уйăхпа кивелĕп,
кив уйăхпа çĕнелĕп,
хĕм хӳххи пек хӳхĕмленеĕп,
суккăр каçшăн – ӳхĕленĕп...

чĕлхесĕр ташăç эп –
кăвар çисе ĕçеп!
ташă –
ман юлташăм
мар,
тантăш ман!

ХĂЙ сăнарне çухатнă
ЙĂХ варрине тухатăп,
чун кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)
чĕлхесĕр ташăç эп –
кăвар çисе ĕçеп!
ташă –
ман юлташăм
мар,
сывлăш ман!

халăх халне çухатнă
йăх варрине тухатăп,
чăн кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)

ташă, ташшăм –
тантăш мар,
ман тăшман:
ташла-ташла-ташла
тăш-манлăланăп хам!

этем чĕлхи пулăп – илемленĕп,
элем* чĕлхи пулăп – киллĕленĕп,
элек чĕлхи пуличчен
ĕлĕк пулса юласчĕ!
çĕлен чĕлхи пуличчен
чĕлĕх чĕлхи пулас: чĕн-н!-
мĕп – шăпăрт!
шăхăр!
шăпăр кала чĕнтерме!



**2.**

те вăхăт кăмăла тупасшăн,
те кăмăл – вăхăта,
хăта, ăçта хӳккӳ? –
кала: ăçта хутку-
пăсу? –
шăп пирĕн вăхăт ку!
ку – манăн вăхăт!
:хăтпăсу!

сехет те хам – чĕрем таппи,
сехмет* те хам – тутам тăппи...

ан чĕмсĕрлен, тĕнче, сĕрле!
çĕрле
хупăсăн куçна –
кăвак çутчен шăп виççĕн
сăнатпăр ыйхăри ăсна:
эпĕ,
тӳпе,
сĕрме купăсăм –
шăплăхунта тупасшăн Чăн сасна!

хăрхăм* ташши ташлăп-и?
пике ташши ташлăп-и? –

эп чӳк ташши ташласшăн!

эй, ташăпа асакансем,

ăсатакан пулса килеймĕр-ши
уявăма?

çитет канса та хăт-ланса!
этемлĕхе аса илтермелли
асамлă ăрăм чĕлхине, шăпа
вăрттăнлăхне каласшăн эпĕ ташăпа!



## 3.

ăшăх çĕртен ушахлантăм* –
шухăш пулса нушалантăм
Аша*!
пушар шарне хурап ăша!
хĕм ăшĕнче ташлап шăнса:
ăçта – Чăн сас?
ăçта? ăçта?..

шăнкрав курăк тăнĕнче
чĕлĕхленсе пурăнать-тĕр,
шăнăр курăк тунинче
хĕлĕхленсе пурăнать-тĕр,
пан-н! таталать, пан-н!
пулса тăрать параппан:
патак мар-тăк, пан-
улми –
патăртаттар ним юлми!

найпа сăрнай калама
сăрка* çактăр халь ама –



**4.**

аваллăха сăна-сăна,
сана шыратăп – чăн сăна!

кĕççе пите кĕве ертĕп,
пĕве сасне кĕвĕ кĕртĕп,
тухăç пулса тухăç парăп,
анăç пулса канăç парăп,
çитес çĕре çарран пырăп,
вырнă хирпе чупса ы!-рăп,
халам* вĕçлĕ сурпан сырăп –
ырă!
халам тĕрри халаллатăр,
сăрка юрри сăр* калатăр

çил çилленсе ӳсет,
упа – упаленсе,
тупа – тупа,
эп – ташăпа!
шăпа,
ĕмĕр мар-тăк, чĕрĕм* пар,
шăпăр тытма шупăр пар,
ача тума мăшăр пар –
пур халăхпа пакапар*
йăх тăсмасăр пил ан пар,
пихампар!

аваллăха сăна-сăна,
сана шыратăп, чăн Сăмах:
кашни пур-çук япалара

аваллăх кăмăлĕ ларать –
аваллăха кăшт перĕнсен
сасси тухас пек пĕрхĕнсе:
манпа ташла-ташла-ташла,
таврам калаçтăр чăвашла!

**5.**

çăва – хупă (с-с-с!)
çăвар купăс
каласа
ярса пусрăм
малаша! –
(çĕн ĕмĕре, тамаша!)



**6.**

шыв сиккишĕн – çӳллĕш çук,
тинĕссемшĕн – анлăш çук,
сывламалăх – сывлăш çук,
сывалмалăх – сывлăм çук,
ăмăртмалăх – ăмăрт çук,
хăлат пулма – кăмăл çук,
йăваш пулма хăват çук –
чăваш пулма майĕ çук!

çăвас çумăр пĕлĕчĕ
кĕмсĕртетет, сас тăвать
(Атте сасне астăвать)
аслатийĕм, калаçах!
(çылăхлине – тип аçа!)
чĕртсе ярса тертлентер –
Вут Амине эрлентер,
эрешмене ерĕçтер:
"сӳт эрешне – тĕрт тӳнтер"

ыр вутама!
ылтăн вут!
çылăхсемшĕн им-сум* çук,
чӳк тумалăх им-сим* çук,
чӳк тумалăх нимĕм çук,
йăхăм сассăрланнă чух
чӳк тумалăх чунăм чух!

ашкăр, кашкăр куçлă вут!
çиçӗм! тепре! тепӗр хут!
камшăн çулăм – пӗтерме,
маншăн – ăша питӗрме!



**7.**

и-и ҫил вĕрет,
и-и ҫăл вĕрет,
ҫăмха вĕрет,
ҫăмах вĕрет,
сăмах вĕреме кĕрет –
вĕре-вĕре чĕлхе вĕрет:
тĕнче ҫутин хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
вĕҫ-хĕрсĕрлĕх хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ар-хĕрлĕхĕн хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
мăн тинĕссен хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ту хырҫисен хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ҫавраҫилсен хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
тавра ҫулсен хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ҫӳлти типшар хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ҫĕрти типтер хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
тӳнтер ҫĕршыв хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп),
ҫĕр ҫăтнă вут хуҫи!
(сан чĕлхӳне вĕренĕп) –

Ч-38111
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ху хуйхуна ху çи!
(тĕнчӳ – хĕн-хур ырçи)
ху çӳппӳне ху çи!
(тĕнчӳ – çӳп-çап çӳпçи)
юнтар та – йӑлт ху çи!
(тĕнчӳ – юн-тар тарçи)
пӑрах инкек кӳме!
(тĕнчӳ – синкек кӳми)
САСна эс тикĕсле!
(тĕнчӳ – пӑсташ* кĕсле) –

эп вилĕп-вилĕп – чĕрĕлĕп,
çĕр тӳпине шав çĕрĕлĕп

Йӑвалӑх Йывӑççи!
санпах сан кĕлевçӳ*,
йӑла тытать пĕр çын –
вирт* хыпнӑ вутпуççи:

кӑ-варӑмçӑм – ка-варлӑ,
ка-варӑмçӑм – кӑ-варлӑ!



8.

тенкĕр* тĕпне тенкĕ ярса пăхар-и? –
пăхăр тенкĕ хумпа кĕмĕллентĕр-и?
кĕмĕл тенкĕ çинче мĕн тĕрри? –
тенкĕр тĕпĕ курнă сăр тĕрри!

эй, ыр хăват, Ашапатман,
сан ăратна эпĕ татман –
тăсатăп:
тĕмен* уйне ырăмартан тасатăп:
тенкĕр шывне кункăрапа ăсатăп:
кун кăра та – тинĕс кăрарах,
чăваш мулне чĕнĕ шаларах,
чăваш сăрне çийĕ çараллах!

(кĕнекене ĕне çимен-мĕн – тин-иç
çилпе вĕçсе килсе систерчĕ тинĕс!)

çур кунĕн сăмахне калать-и, тен, кĕр? –
юррусенче аваллăх пуль сан, тенкĕр?
шăв-шавунта шав шыв куççулĕ, тенкĕр –
миçе хула шăпин ташши ку, тенкĕр?

шыв мар йĕрет – чăваш ӳкернĕ тенкĕ,
йĕрте-йĕрте ейӳленет пĕр тенкĕр...

чăмтарнă та, чăм – тарнă,
чăваш чунне пытарнă:

чăваш чунне –
(чонне) –
чăнне –
чанне –
чинне –
чĕнне –
(-ченне!) –
пытарнă...



**9.**

тĕнче тертне çĕнтерме
хамран турăм çĕн тĕрме:
терт тĕрми эп, чĕмере!
(тĕрме хăй те тĕрмере!)
питĕрме пит питĕрмен –
тĕрме мар-тăр ку – термен*:
тĕнче тертне пĕтерме –
кĕрешме!
малашне те, эрешмен,
арăш-пирĕш эрешле
(тӳнтерле те – решетке!) –
хуйхăр-суйхăр кĕрчĕсем
терт тĕрминче пирчеччĕр,
кĕре питĕм кĕрчетĕр,
мĕн тетĕр?

мĕн тăвас ман кун пек чух? –
хĕрĕх хĕлĕхлĕхех чух
решеткесен сĕреки –
кĕввĕм пухтăр кĕреке



(сĕрекесен серепи...
серепинче – эп – эпи!) –

чĕр тĕрме пек пурăнап
(хам кермен пек курăнап)
килсе сутăр хуйхăра
çак хăрав-
săр-р! ху-çăра

**10.**

– Хăват пур çутçанталăкăмăрăн: вут.
Хăват пур çутçанталăкăмăрăн: шыв.
Хăват пур çутçанталăкăмăрăн: çил...
Эс – вут та, шыв та, çил те, турпике!
Сана савас хевтемĕр пуррипе
Кăварланать чĕремĕр – ан тирке:
Кала кăна – пулатпăр сан арчу,
Кала кăна – пулатпăр сан тарçу...

– Тытсан тытап кулла тара:
Кулса ярсан усал тарать...
Тиркемĕп. Çав хевте пуртан
Чĕремĕрсем туять пĕртан...

Куç улмисем турат улми пуласшăн –
Тавралăха пĕр харăс йалт курасшăн,
Пурна-киле – çĕр чăмăрĕ пек ăшшĕ...
Эх, кăмăл туртăмĕ – турамшăн,
Кам ытлашшишĕн – Турă, ан çăл!

– Аркишĕн йăвалатăн кĕрĕке...
Эс кĕввӳпе пуçтартăн кĕреке!

– Ăрăслан* та, ар, ăслан,
Эп те сан пек арăслан –
Ăраскалăм ăрасна...

Манран эсĕ кантăк ту,
кирлех пулсан – кантăк Ту:

ту урлă талкăшмĕ утту,
харам тарламĕччĕ уту –
хам витĕр йăлт САСартăк
курманнине кăтартăп.

– Юрла апла! Юрлар!
Мĕнрен те, юрăран йăх юрлă мар.

– Ман – вутлă ташă, вутлă кĕвĕ,
тӳсейĕ-и кĕрнеклĕ пĕвĕр? –
пӳ-си тӳссен, чунсен тӳсме тивет –
çапла юрлать ман кĕвĕллĕ тевет.



**11.**

ташла, тавралăхăм, калаç!
хĕнне хĕвре ан тыт тет каç –
шăп чăтнăран çĕр пичĕ пĕркеленчĕк!
кĕленче витĕр çеç тĕнче ĕлккен-тĕк,
тĕспе çеç мар, саспа та калаçтар –
вак ванчăкран та пултăр пархатар:
чăл-пар!
саланчĕ пур Хыпар:

х
ж а ш
и г
к я д
й б и
у һ а
ы й г в
р м
д у ү
г ц
я
с

сассем те пурнăç пек чăпар –
пар-р!
пал-л!
чăнкăр-чанкăр,
чăлтăр-чалтăр,
чал-л!
шак-шак, шакăрт,
шăнкăр-шăнкăр-шăнкăрт,
çăтăр-çатăр,
шанкăр-р!

тинкёлти,
тин-кёл-тин,
шалтӑрт,
тринь-тринь,
чанкӑрт,
чӑнкӑл-чанкӑл,
чӑн-чан-н!
чан-н!
чан-н!
чан сасси –
Чӑн сас-и?
(тен, а-а-ачан?)

:мана пӑрахнӑ Ҫӳл Тур-а-а-а-
а-а-а!.. а-а-а?..
............................
...........а-а-ан-н!..
............................



**12.**

акăш ташши тетĕр-и?
йăкăш-йăкăш шумашкăн
акăш-макăшлăх – пĕрре,
тахăш пăхрĕ кăнн! мар – хăн-

чăр*... - мантарчĕ! –
чарлан тарчĕ!
(ишме чармалла марччĕ)...

(тахăш – çын-тăк – тарама:
чăнлăх хăнчăр-ха ăна!)

пăхтăр, пăхтăр хăнчăррăн,
хăнкăравăм-суккăрăм*...
пӳрнĕ-пӳрмен япала –
пӳрнем калатăр бала...

çук! ман хамăн хăнкăрав –
хăнкăртатма ан хăра!
акăш-макăшлăхăмпа
юхса каям юхăмпа



пĕвеленсе пӳлĕнем,
хам пĕвĕмре хам ĕнем:
тӳрришĕнех кӳлешем –
çуккă пулма килĕшем!

кӳл юхăмне кӳлĕнем –
çыр-пăявпа тӳленем,
кĕлĕ кĕллем – киленем,
килех килсе кĕлленем!

...............................................

ăшĕ-чикки, пултăрăм,
тĕрмен пушă пултăр-им?
(çăлтăрсемшĕн Ту тăрри
чĕрне вĕççĕн тăтăрин)

пуклак пекки – çавракашăн,
măкла така – мăйракашăн,
шăннă лĕпке – шĕлепкешĕн
(шеллеп!) кĕшĕл-л
тăчĕ пĕтĕм кăмăл:
мур, хамах
тупăп меллĕ урхамах –
камăн йӳрĕк ут-лаши
маншăн тесен ытлашши?!
эп – çын тертне пухакан:
маншăн тĕрлĕ хĕн паха –
тухса сутăр ик хака
сăтăр пĕлмен ухмаха! –
тĕнчипе ман çеç-тĕр – ме! –
хуйхă хупакан тĕрме



**13.**

урлă-пирлĕ чӳречем:
мĕлки тирчĕ чĕр ӳте

хĕлĕхсенчен пир тĕртме,
этем тертне катертме
таврара та пĕр чунта
ют нушашăн шеп сунтал:

эпĕ çуннă чух кăна
туссăр юлмăп чухăна

хĕнĕр! сĕнĕр хĕнĕре –
хĕме хĕнсĕр хĕнтерех,
хурăртан çăла-çăла
çирĕплентĕм хурçăлла –

тĕнчипе те пĕр чунта
ют нушашăн шеп сунтал!

хуçăр хурçă ӳтĕме
тӳме туса йӳтеме –
(пуçăм юлĕ йăлăрах...) –
ан çухатăр йăлăра

хĕнĕр хăвăр хĕнĕре! –
ан хĕрхенĕр хĕрĕре!

лапчăтăр!
хальччен чăтнине чăттăр!
пештĕр* ăшне хупнăн тўстĕр –
(кăкăр умĕ – ăрăм пўштĕр*!):
ишчĕр, ашчĕр – ман! – ан тайăн –
çак-тăр манăн чăн-чăн тайăн*!

авăр, ярăр авăра! –
авăр тĕпне таврăрам,
уншăн пулам такана –
чăпăл тăвам такама,
ейў пулса тăкăнам –
ўхлĕм пулса ухăнам

урăр, урлă тăрăрах –
ăсăм тата тăрăрах:
усал ури такăнма
уратасем таканлам

акар йытти, эс хаяр,
вакла-вакла вакка яр –
тĕнче тепĕр енĕнче
шăтса тухăп – çĕн тĕнче

хатĕр хĕл хĕнне йăтма –
катĕр* маншăн ку – йăк* мар:
уйăх хĕлĕх-хĕлхемне
карăнтарăп хĕл енне –
пĕр шăпаллă курнăçу:
хĕл – темтепĕр курнă çу

хыр куççулĕ пулăп та –
вăхăт чĕр илем туптать:
сухăр-ӳтĕм ăшĕнче
ĕмĕр вăрри ăшăнчĕ!

.................................................

Пăлхар курнă çулăма
ма пăрахар улăма?
çăтнă ахăрсаманам
вут çĕнетиччен çунам!

нимĕн тăвайман енне
йĕрĕр пулса йĕрĕнем
пур этемлĕх нишĕнчен –
килĕ улăп йышĕ, тен:

пушхир тупри пулăп та,
кăчăр-кăчăр кăчăртатăп –
(асилĕвне пăчăртатăп!)
уй-хир тупри пулăп та –
тутă пулĕ улăп та!



юман çумне перĕнсе
йĕкел тăкăп пĕр ĕнсе:
хуппи шĕкĕр пултăрччĕ,
тĕшши йĕкĕр пултăрччĕ! –

ураланнă Урала

улӑштарӑп пуралла,
каҫ ҫутипе усӑ курӑп –
Каҫпи урлӑ каҫӑ хурӑп,
Кавкас тӑвӗн кӑкӑрне:
“ёмӗрт Атӑл кукӑрне!” –
тесе хушӑп вӑратма –
хушӑк сассине вӑлтма...



**14.**

– чаш-ш!
– пăш-ш!

Чул: Шыври, тăрăш, ик тăшман
Юлташланччăр ман ăшра!

Шыври: Тупăштарăп, тупăштарăп!
Тупăш пурпĕр тупăштарĕ.

Вут: Чулшăн пулăп тупăш – тарăп:
Чул ăш-чиккине чун парăп.

Чул: Шывăн тарĕ эп – вĕт чул,
Чунлăлантăм, халь – вутчуль.

Шыв(вута): Эс манран тара-тара
Кĕрсе тартăн хам тара.

Вут(чула): Тара тытрăм терĕн пуль?
Тĕсĕ, тĕсĕ ханттара:
Чунсăр пулнă çак таран.
(хăй тĕллĕн):
Чун та –
чул кă-варĕнче...

Йăлтăртатăп, ялтăртатăп,
Ял тăрринчен Алтăр татăп:
Чалтăр-р! çулăм сапăп – чул
(сапăр чулăм!) пулĕ мул.

Килсе ил-ха янтă мул –
Вут пек ялкăшĕ туму
(Васка каска пуканне
Укалама – пукане!)

Ахалли, ахах, вутчуль... –
Суйлас тесен темĕн чуль:
Ан хараплăр ямăта –
Пăрахап хăямата.

(хăй тĕллĕн):
Чун та –
чул кă-варĕнче...
чул илемĕ – варринче!

(айăпли чул пĕр хăй мар-иç –
чакмапа* çапма хăймарĕç...)



**15.**

ёнтĕ чулăн варĕнче
çунтăм – чун кăварĕнче:
çакăн пек ман çĕн хĕсмет –
шыв шырамĕ тек хĕсме...

...ёнĕр – хĕнĕр хĕнĕре,
хĕнĕр – хĕмсĕр хĕнтерех!
хĕрсе тухтăр вут-ăшран –
вутăш! –
тинĕс çунтарса анам –
тинĕс шăтарса анам,
шыв нушипе пурăнам,
хум шăпи пек курăнам!

вутпа шывран шăранса
кайрăм хум тĕпне анса:
тăтăш пулма кĕрешрĕм –
вутăш пулма кĕрĕшрĕм!

лăкăр-лăкăр вĕрĕп те
(ăрăм чĕлхи вĕрĕп те!) –
тинĕс тĕпне типĕтеп –
ўлĕм пулать ипĕ*, теп

.......................................

кĕввинчен хăть купăс ту –
хак памалăх юкăс ту*:

шăнкăр-шăнкăр шӳлкеме –
сасне пулать çăл теме!

ахальтен-им тумăм кĕмĕл ман –
вутăш иртнĕлĕхĕ манăçман:
антив, ăратăм – шăпăрт пулă,
анчах эп – урăх ятлă пулăм!

пĕр шухăш пур, унран ытла – ыйтмалли:
калаç, хушпу, калаç, эреш, ыймалли*!
калаç, алка, калаç, ама, шӳлкеме,
çĕн ĕмĕре чалам* каласшăн кĕме!



## 16.

– мĕнле?
меллĕ?
(теветлĕ те —
теветкеллĕ?!)

– шел-им?
шлем
мар та –
хушпу!

хăш – (пур
шухă шухăш!
ĕмĕтĕм пур!) –
хӳшĕ-ӳпле
хуçи –
ĕмпӳ* ?

пĕлĕт
пĕлет



**17.**

ахрăм килет кунталла –
Турă кулать пулмалла,
эпĕ Турă куллишĕн
пулма хатĕрччĕ ишĕл-

чĕк!* –
вăйă шăмми ыватрăм,
чĕкеç пулса пил ыйтрăм:
пĕсехемре вут çунать –
çуртна упрать ман çунат

............................................

пур пĕр кайăк – сĕмсĕр çам*
(пырне пултăр йӳç имçам!)
хĕвел хĕмне упрама
хушăп пĕтĕм урама:
тĕнчери мĕнпур урам,
сисчӳлен мана кура!
сисчӳлен те сас-чӳлен –
ыйхунта Чăн сас тĕллен!



**18.**

хам сисмерӗм – пуҫӑм чаллӑ! –
пултӑм-тӑтӑм ҫӗн Хуҫаллӑ.
("nakonez-to virosla*" –
тет пӗр айван вырӑсла)

кам эп: вырӑс е чӑваш? –
тен, пӑта пӑтти ҫӑрас:
ҫӗрӗ-и? –
(чӗлхем ҫине килнине,
ҫула пӑрам ҫав енне)

..................................................

сӑвап пултӑрччӗ тесе,
сӑвап юлнӑ-пӗр ӗҫе –
вӑхӑт картнӑ чикӗре
куртӑм кутӑн тӗкӗре

(пурнӑҫ мар ку пурӑнӑҫ –
тӗкӗр ҫинчи курӑнӑҫ!)
вутӑн вӑрттӑн чӗлхипе
кутӑн пуплӗп мӗлкепе:

кайнисене курӑнӑп –
килес йышпа пурӑнӑп:

(ĕнтĕ арăш-пирĕш тин
пулас килмĕ пирĕштин)

ăрусене пĕрлештерĕп,
ирĕлтернĕ пăр ĕçтерĕп –
туй пур ĕмĕр тутине
харăс чĕрĕлнĕ пур не-

сĕл!-кĕш кăна юличчен
çунам – кĕшĕк* пуличчен:

сĕлешен кайăк пулăп та –
чĕлхеленĕп!
чĕлхелетĕп!
юрлăп юрлăх* пуйиччен,
ташлăп талай* уйĕччен!

...хĕм-кĕртчĕ ман им-сим –
хĕн-тертсĕр юлтăм-шим? –

чĕлхеллĕ ташăç эп –
кăвар çисе ĕçеп!

таса сасне çухатнă
йыш варрине тухатăп
куç кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)

чĕлхеллĕ ташăç эп –
кăвар çисе ĕçеп!

ташă –
ман юлташăм
мар,
тантăш ман!

ХĂЙ сăнарне çухатнă
ЙĂХ варрине тухатăп
чун кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)

чĕлхеллĕ ташăç эп –
кăвар çисе ĕçеп!
ташă –
ман юлташăм
мар,
сывлăш ман!



халăх халне çухатнă
йăх варрине тухатăп,
чăн кăкĕнчен пăхатăп –
(ăрăмласа тухатăп!)

ташă, ташшăм –
тантăш мар,
сывлăш мар,
ман тăшман:
ташла-ташла-ташла
тăш-манлăлантăм хам!
чĕкеç чĕлхи пултăм – киллĕлентĕм,
чӳк ĕç чĕлхи пултăм – илемлентĕм,

элес-мелес пуличчен,
тĕмен мелне илесчĕ!
çĕлен чĕлхи пуличчен
чĕлĕх чĕлхи итлес: чĕн-н-н!
чăн-н-н!
Чăн, чĕн!



**19.**

çунчĕ шалçанталăкăм
çитмĕл çичĕ тамăкăн:
çанăм çунчĕ – ут утлантăм,
çаннăм çунчĕ – çунатлантăм,
ăшăх çĕртен ушахлантăм –
шухăш пулса ушалантăм*,
çавраçил пек çаврăнтăм –
тĕнче касса таврăнтăм...



ĕнтĕ пурте пăхаттир –
ĕнчĕ пӳртĕн пăхать ир

...çавраçил пек çаврăнтăм –
çĕрĕ пулса чарăнтăм!

çĕрри витĕр пăхăрсам –
(тӳрри витĕр!) – эх, Хуçам,
пулса тăнă эс ху çам:
çук хĕвеле пăхап-и? –
çук тӳпере ун хапи!

çылăхăра манра çунтарнисем,
ман куçăмран халь çылăхсăр пăхатăр –
эй, туррăмсем!
каçарăр чурăра –
хĕвел чĕртсе ташлатăп çаруран!

...хĕвел ăшши таçта-тăк,
суккăр ташши ташлатăп:

хĕм хӳххи хам – хӳхĕмлентĕм,
суккăр куншăн – ӳхĕлентĕм!

вархан*, аркан!
аркан, орган!
сассем – çич ванчăк,
пĕрпĕтĕм сас пулса йăванчĕ...

ахăрашса чупать пĕртен-пĕр ахрăм –
суя тесе ахрат тĕпне пăрахрăм...

: кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр, чанк!
вăр-р! вăр-р!
сĕлпĕр-р!
чĕлтĕр-р-рт!
çĕн терт? –
(ташшăм пурпĕр çĕнтерет!) –
чĕлтĕртетсе çĕрĕ ӳкрĕ-мĕн! –
çĕррĕм çинчи çыру кукри-мĕн! –

Чăн сас туппи – çыру тупри-мĕн! –

ташшăм шыранине тупрĕ-мĕн!

эх, ташшăм ман – аташăвăм!
аташ, айташ адажио:
ташла, аташăм* – акăшăм,
ташла чăвашлăх чапĕшĕн!

... çылăхăра манра çунтарнисем,
ман куçăмран халь Турă пек пăхатăр –
эй, туррăмсем!
пайлатăр пайтăра –
эп, пайăр-калан-СА, СĂпай тăрам...

эй, туррăмсем!
валеçĕр тӳпĕре,
ман Ту – пĕрре:
тӳпере:

çĕррĕр витĕр кĕтĕр хĕрĕре:
çĕрĕр витĕр тухăç хĕрелет:
çĕн хĕвел кăварĕнче – тахшин:
хĕрлĕ шупăрлă ама ташши!

*2000-2001çç. чикки*



Ăнлантарусем:

*Элем* – ялав *(9 стр.)*
*Сехмет* – инкек *(10 стр.)*
*Хăрхăм* –чура хĕр *(10 стр.)*
*Ушах* – тĕпсĕрлĕх *(12 стр.)*
*Аша* – чăваш турри *(12 стр.)*
*Сăрка* – çурăм е кăкăр çине çакмалли кĕмĕл тенкĕсемпе илемлетнĕ ярапа *(12 стр.)*
*Халам* – сурпан вĕçĕнчи эреш *(13 стр.)*
*Сăр* – вăрттăнлăх *(13 стр.)*
*Чĕрĕм* – кĕске вăхăт хушши *(13 стр.)*
*Пакапар* – пĕртан *(13 стр.)*
*Им-сум* – шут, хисеп *(16 стр.)*
*Им-сим* – ĕçме-çиме *(16 стр.)*
*Пăсташ* – пăрахăç *(19 стр.)*
*Кĕлевçĕ* – чӳкçĕ, апăс *(19 стр.)*
*Вирт* – пушар *(19 стр.)*
*Тенкĕр* – тинĕс *(20 стр.)*
*Тĕмен* – тĕнче *(20 стр.)*
*Термен* – вăй-хăват *(22 стр.)*
*Ăрăс* – телей *(23 стр.)*
*Хăнчăррăн* – тӳртĕн *(27 стр.)*
*Суккăр хăнкăрав* – музыка инструменчĕ: çавра хăнкăрав *(27 стр.)*
*Пештĕр* – пушăт хутаç *(30 стр.)*
*Пӳштĕр* – хĕрарăм кĕпи умне çĕленĕ тăватă кĕтеслĕ хăю *(30стр.)*
*Тайăн* – шăпа пӳрнĕ çул *(30 стр.)*
*Катĕр* – хисеп, чыс *(30 стр.)*
*Йăк* – инкек *(30 стр.)*
*Чакма* – çулу *(34 стр.)*

*Ип* – усӑ *(35 стр.)*
*Юкӑс ту* – тумтире тытса пӑхса пахала *(35 стр.)*
*Ыймалли* – хӗрарӑмсен ҫурӑм ҫине ҫакмалли шӑрҫаллӑ эреш *(36 стр.)*
*Чалам* – хурав *(36 стр.)*
*Ёмпӳ* – патша *(37 стр.)*
*Чӗк* – вӑйӑ шакмакӗн пӗр енӗ *(38 стр.)*
*Ҫам* – юмахри ҫунаттипе хӗвеле хуплама пултаракан кайӑк *(38стр.)*
*"Nakonez-to virosla"* – "тинех ҫын пултӑм" *(39 стр.)*
*Кӗшӗк* – кайӑк *(40стр.)*
*Юрлӑх* – чухӑнлӑх *(40 стр.)*
*Талай* – ҫитсе кураймасла инҫет *(40 стр.)*
*Уша* – ҫӑлтӑр ячӗ *(43 стр.)*
*Вархан* – купӑс *(44 стр.)*
*Аташ* – пӗр ятлӑскер *(44 стр.)*



*Тетралоги çак ырӑ çынсем пулӑшнипе кун çути курчӗ:*

"Акконд" УАО,
генеральнӑй директорӗ Валерий Николаевич Иванов

"Волгарь-пейдж" ООО,
директорӗ Александр Ванифатьевич Якушкин

"Чувашгостранссигнал"
Унитарлӑ предрияти, директорӗ
Анатолий Александрович Чельцов

"Концерн Чувашгосснаб" УАО,
генеральнӑй директорӗ Александр Васильевич Лебединцев

"Чебоксарыстройгаз" ХАО,
генеральнӑй директорӗ Михаил Николаевич Краснов

"Букет Чувашии" УАО,
генеральнӑй директорӗ Олег Вадимович Мешков

"Инвест-ЛАД" строительство фирми,
генеральнӑй директорӗ Валерий Николаевич Гордеев

"Тав сервис" ООО,
генеральнӑй директорӗ Иван Михайлович Антонов

Валерий Михайлович Антонов

Николай Геннадьевич Григорьев

Родион Иванович Комаров

Сергей Владимирович Сорокин

*Тайма пуç сире. Марина*

Марина Федоровна Карягина

# Тăваткăл тĕлĕксем / Квадратные сны
Тетралоги / Тетралогия

Тăваттăмĕш кĕнеке / Четвертая книга

# Чĕрĕлĕх ташши / Танец жизни
Поэма

На чувашском языке

Рисунки Станислав Юхтар

Редактор А.И.Дмитриев
Макет, верстка О.А.Улангин
Корректор М.Ф.Степанова

Типография издательства «Руссика»
Лиц. ПЛД № 27-50 от 19.10.98 г.
Чебоксары. ул.Афанасьева, 12
Заказ №345.
Тираж 300экз.


издательство
РУССИКА